# ЮРĂ ĂСТИ

## *(Тăваттăмĕш калаçу)*

Чăваш музыка искусстви Совет влаçĕн саманинче хăвăрт утăмсемпе аталанчĕ_ Унччен пирĕн профессионал-комп'озиторсем пулман. Совет влаçĕн çулĕсенче чăваш композиторĕсен темиçе ăрăвĕ ӳсрĕ. Акă, хăшпĕр ятсем: Федор Павлов, Степан Максимов, Василий Воробьев, Григорий Лисков, Геннадий Воробьев, Анатолий Тогаев, Филипп Лукин, Григорий Хирбю, Герман Лебедев, Федор Васильев, Аристарх Орлов-Шузьм, Виктор Ходяшев, Аверий Токарев, Тимофей Фандеев, Анисим Асламас, Михаил Алексеев, Анатолий Петров, Александр Васильев. Эсир, ачасем, асăннă композиторсен паллăрах произведенийĕсемпе шкулта музыка урокĕсенче паллашатăр. Вĕсен юрри-кĕввисем пирĕн пурнăçа илем кӳреççĕ, ĕмĕт-кăмăла аслăлатаççĕ, çĕклентереççĕ. Композиторăн кунçулĕпе творчествине сывăхрах пĕлни музыкăна юратакан кашни çыншăнах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кашни композиторăн творчестви хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхсемпе палăрать. Пĕрисем пĕчĕк жанрпа (юрă, романс, баллада, кĕвĕ), теприсем пысăк формăпа (опера, балет, оперетта, оратори, кантата, симфони) çыраççĕ. Ку калаçура пирĕн вăхăтри паллă чăваш композиторĕн Филипп Миронович Лукинăн пултарулăхĕпе паллашар. Вăл—юрă ăсти.

Ф. М. Лукин Çĕрпӳ районĕнчи Çавалçырма ялĕнче 1913 çулта çуралнă. Музыка пĕлĕвне Шупашкарти музыка техникумĕнче (халĕ Ф. П. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищи) илнĕ_ Шăпах çак вăхăтра юрăсем кĕвĕлеме тытăннă пулас композитор. Техникумран вĕренсе тухнă хыççăн Мускавра П. И. Чайковский ячĕпе хисепленекен консерваторинче -вĕреннĕ. Кайран вунтаватă çул хушши Чăвашсен юрăпа ташă ансамбльне ертсе пынă. 1948 çултан пуçласа 1978 çулчченех вăл чăваш композиторĕсен организацийĕн правлени председателе пулса ĕçлерĕ, вăтăр çул ытла Шупашкарти Ф. П. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищинче вĕрентрĕ.

Композитор халиччен 600 ытла юрă кĕвĕленĕ. Вĕсен йь'шĕнче пĕччен е хорпа юрламаллисем пур. Вĕренекенсем валли çырнă произведенисем те нумай.

Ф. Лукинăн юрри-кĕввисене хамăр республикăра кăна мар, çĕршыври нумай-нумай вырăнсенче тата Болгарире, Демократиллĕ Германи Республикинче, Венгрире илтме пулать.

Композиторăн пĕччен тата хорпа юрлама çырнă юрăсем нумай терĕмĕр. Сăмахран, «Салам, Мускав!», «Çамрăксен юрри», «Пире парти ырлăх паче» произведенисемшĕн композитор 1952 çулта СССР Государство премийĕ илме тивĕçлĕ пулнă. Ку юрăсенче халăхăн аслă ĕçĕсем, ĕмĕт-шухăшĕсем лайăх палăраççĕ, вĕсем фольклорпа таччăн çыхăннă.

Ф. Лукинăн тĕрлĕ инструментсемпе калама çырнă произведенисем нумай: сĕрме купăспа виолончель, труба, тромбон тата кларнет валли çырнă пьесăсем илемлĕ мелодиллĕ, вĕсене юрă майлă хывнă. А. Кăлканăн «Иван Калмыков», Ф. Павловăн «Ялта», Л. Родионовăн «йăм-хĕрлĕ кӳлĕ», А. Эсхелĕн «Вутлă чул» спектаклĕсене драма театрĕнче лартнă чух Ф, Лукинăн ятарласа çырнă юррисемпе усă курнă.

«Çĕршывăм, савăн», «Октябрь ялавĕч[1], «Çĕршывăм-анне», «Чечекленет Чăваш çĕршывĕ», «Тăван хула» тата ытти юрăсенче композитор тăван çĕршывăн мухтавлă ĕçĕсене, партипе Ленина, çамрăксен пултарулăхне, вĕсен ĕмĕчĕсене мухтать.

Ленин çинчен çырнă юрăсене Ф. Лукин уйрăмах тимлĕ кĕвĕлет. Композиторăн «Ленин» ятлă юррин (сăмахĕсем В. Давыдов-Анатрин) лирикăллă хавхаланăвĕ тата чĕререн тухнă кĕвви итлекене шухăша ярать, çĕклет.

Эсир, ачасем, Ф. Лукинăн шкул валли çырнă юррисенчен нумайăшне пĕлетĕр ĕнтĕ. «Тăри», «Похода», «Пионерсен маршĕ», «Пире парти ырлăх пачĕ» юрăсене кам вĕренмен пулĕ! Телейлĕ ачалăх, тулăх пурнăç, пуласлăха ĕмĕтленни—композитора тарăн шухăшлă, илемлĕ те асра юлмалла кĕвĕсем хывма хавхалантарнă. Тăван музыка искусствине аталантарас тесе чун-чĕререн тăрăшать пирĕн паллă композитор: çитĕнӳсене мухтать, çитменлĕхсене питлет, тăван юрра ытларах юратма, ăна упрама вĕрентет.

Юрий КУДАКОВ.